«Наци проекчĕсем – Муркаш районĕнче»

# Тарăн пĕлӳ валли шкулсенче çул уçă

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Олег Николаев хăйĕн сăмахĕнче ачасем пирĕн пуласлăх пулнине яланах тĕпе хурать. «Ачасене шкулта вĕренме хăтлă та интереслĕ пултăр, вĕсем хăйсен малашлăх утăмĕсене шкултах палăртчăр», – тет вăл. Хăйĕн сăмахĕсене ĕçпе çирĕплетессине те иккĕмĕш çул ыррăн хăвармасть. Çакăнта çĕршыври наци проекчĕсем те хăйне евĕр пулăшу утăмĕсем пулса тăраççĕ.**

**Кăçал Раççейре 12 тĕрлĕ наци проектне пурнăçа кĕртессипе калăпăшлă ĕçсем пурнăçланаççĕ. Вĕсенчен кашниех халăхăмăр пурнăçне ырă еннелле улăштарассипе, малашлăха шаннипе çыхăннă.**

«Вĕренӳ» наци проекчĕн шайĕнче иртнĕ çулсенче районти шкулсенче пысăк ĕçсем туса ирттерме ĕлкĕрчĕç. Çапла вара вĕренӳ заведенийĕсем ытларах илемленчĕç, хăтлăланчĕç, ачасемшĕн чăннипех иккĕмĕш кил пулса тăчĕç. Çакăн пирки черетлĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă май кашни шкултах ырăпа аса илчĕç. Уйрăммăн илсен, иртнĕ вĕренӳ çулĕсенче цифра тата гуманитари профилĕсен «Точка роста» центрĕсем Калайкасси, Çатракасси, Йӳçкассипе Мăн Сĕнтĕр вăтам шкулĕсенче хăйсен алăкĕсене уçрĕç. Çак юхăм черетлĕ вĕренӳ çулне хатĕрленнĕ май кăçал тăватă вăтам шкулта пурнăçа кĕчĕ. Вĕсем: Москакассипе Муркаш тата Ярапайкассипе Чуманкасси вăтам шкулĕсем.

Мăн Сĕнтĕрти В. Верендеев ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан вăтам шкул кăçал республикăри 50 процент е ытларах кивелсе çитнĕ шкулсен йышĕнче капиталлă юсава тивĕçрĕ. Çу каçа «Уютстрой» ООО шкулти юсав ĕçĕсене 30 миллион ытла тенкĕлĕх пурнăçланă. Çапла вара çĕнĕ вĕренӳ çулне шкул ачасемпе учительсене питĕ хăтлă кĕтсе илчĕ. Пĕрремĕш класа ура ярса пусакан 54 ачапа вĕсен ашшĕ-амăшĕшĕн ку питех те пысăк парне пулчĕ. Шкул ертӳçи Л. Ванюшкина хăйсене çавăн пек хăтлăх туса панăшăн строительсене пысăк тав сăмахĕ каларĕ. Кунти юсав ĕçĕсемпе кăмăллă пулнине район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев та пытармарĕ. «Çу каçипе кунта юсав пынипе пĕрре мар интересленме тиврĕ, анчах нихăшĕнче те пит хĕретмелле пулмарĕ. Кун пек шкулта ачасен тăрăшса вĕренмелли çеç юлать», – терĕ строительсен тăрăшулăхне палăртса Ростислав Николаевич. Асăннă шкулта висĕм çулах цифра тата гуманитари профилĕсен «Точка роста» центрĕ уçăлнă. Çакă та мăнсĕнтĕрсем пурнăç çулĕпе çирĕп утнине çирĕплетет.



Çĕнĕ вĕренӳ çулĕ пуçланнă ятпа Чăваш Республикин Пуçлăхĕн саламĕпе республикăри гражданла оборона тата чрезвычайлă лару-тăру патшалăх комитечĕн председателĕ О. Яковлев паллаштарчĕ.

«Уютстрой» ООО ертӳçи А. Васильев уявпа саламласа шкула юрă-кĕвĕ центрĕ парнеленине тĕл пулăва пухăннисем савăнăçлă йышăнчĕç.

Районта наци проекчĕпе килĕшӳллĕн цифра тата гуманитари профилĕсен «Точка роста» центрĕсем уçассипе епле ĕçленипе паллашма çав кун пирĕн тăрăхра Чăваш Республикин вĕренӳ тата çамрăксен политикин министрĕн 1-мĕш заместителĕ А. Лукшин та пулчĕ.

Муркашри вăтам шкулта çак кун ачасен пĕлӳ шайне ӳстерме пăхнă гуманитари профилĕсен «Точка роста» центрăн 5 кабинетне уçрĕç: химипе, биологипе, технологипе тата физикăпа 2 кабинет. Район администрацийĕн пуçлăхĕ Р. Тимофеев асăннă шкул ытти вĕренӳ çулĕнче те хастарлăхпа палăрнăран малашне татах та сумлăрах утăмсем тăвасса шаннине пĕлтерчĕ.

Шкул директорĕ Н. Смирнов хăйĕн сăмахĕнче иртнĕ вĕренӳ çулĕнчи ӳсĕмсем çинче чарăнса тăчĕ, ырăпа палăрнисене ятран асăнса хăварчĕ. Кунта паян 1010 вĕренекен парта хушшине ларчĕ. Вĕсенчен 47-шĕ – 11 класра вĕренекенсем, 116-шĕ – вĕренме пĕрремĕш класа килнисем.

Район администрацийĕн вĕренӳ, çамрăксен политикин тата физкультурăпа спорт пайĕн пуçлăхĕ З. Дипломатова шкул ачисемпе педагогсене тата ашшĕ-амăшĕсене уявпа саламланă май иртнĕ вĕренӳ çулĕнче палăрнă вĕренекенсене дипломсем парса чысларĕ.




Муркашри вăтам шкулти уяв линейкине тата ун хыççăн гуманитари профилĕсен «Точка роста» центрăн кабинечĕсене уçма А. Лукшин та хутшăнчĕ. Алексей Петрович шкулта ĕçлекенсем пурнăçпа тан пынине палăртрĕ.

Çак кунах Чуманкасси вăтам шкулĕнче те савăнăçлă лару-тăрура гуманитари профилĕсен «Точка роста» центрăн кабинечĕсене уçрĕç **(сăн ӳкерчĕксенче)**. Кунта килнĕ хăнасем шкул ачисем çĕнĕ лабораторисенче хăйсене çирĕп туйнине курчĕç. «Вĕренĕвĕн кун пек мелĕсене эпир тахçанах кĕтсе», – терĕç ачасем алă айĕнчи хатĕрсемпе электричество кăлармалли хатĕр ăсталаса.

Районта цифра тата гуманитари профилĕсен «Точка роста» центрĕсене уçма нумай укçа-тенкĕ кайнă. Асăннă центрсем кăçал уçăлакан 4 шкулти 14 класа юсаса хăт кĕртме çеç вырăнти бюджетран 2 миллион та 212 пин тенкĕ уйăрнă. «Успех каждого ребенка» нацпроект тытăмĕпе çав классенче федераци укçи-тенкипе 3 миллион та 324 пин тенкĕлĕх çĕнĕ йышши лабораториятхатĕрĕ вырăн тупмалла. Паянхи куна вĕсен пысăк пайĕ шкулсене килсе çитнĕ те ĕнтĕ.

***Проект Чăваш Республикин Цифра аталанăвĕпе информаци политикин тата массăллă коммуникацисен министерстви пулăшнипе пурнăçланать.***

Партисен пурнăçĕнчен

# Халăх программинче 50 пин ытла сĕнӳ

«Единая Россия» партин XXXI регион конференцийĕн виççĕмĕш тапхăрĕнче Халăх программине йышăннă. Унпа парти кандидачĕсем Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавне хутшăнаççĕ.

Программăна республикăра пурăнакансен сĕнĕвĕсене шута илсе хатĕрленĕ. Сĕнӳсене парти приемнăйĕсенче, социаллă сетьсенче пухнă, кандидатсемпе тĕл пулнă чухне те сĕнӳ паракансем пулнă.

Пĕтĕмĕшле 50 пин ытла сĕнӳ пуçтарнă. Вĕсем республикăн малашнехи экономикăпа социаллă пурнăç аталанăвĕпе, çынсен пурнăçне хăтлăрах тăвассипе çыхăннă.

Конференцире тухса каланă май, Чăваш Ен Пуçлăхĕ Олег Николаев çавна палăртнă. Программа содержанийĕ Чăваш Республикин Правительствин ĕçĕ-хĕлĕн тĕп тытăмĕ пулса тăрĕ. Суйлав хыççăн республика ертӳлĕхĕ хăйне май «анлă правительство» йĕркелеме планлать.

Асăннă парти Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕнче парти программине пĕрремĕш йышăннă. Унта республикăра пурăнакансен вуншар пин сĕнĕвне кĕртнĕ. Çавăнпа та унăн ячĕ – «Халăх программи. Вăйлă Раççейшĕн тата çынсен ырлăхĕшĕн. Чăваш Ене пĕрле аталантаратпăр!» Ытти партисем – Чăваш Ен Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕнче вĕсем пĕтĕмпе 10, суйлавçăсен умне федераци программисемпе тухаççĕ. Акă «Справедливая Россия – За правду» парти база тупăшне тĕрĕс тăвассине мала кăларать. КПРФ хăйĕн суйлавçисене «халăх влаçĕ патне 10 утăм» сĕнет. ЛДПР вара ĕç укçин чи пĕчĕк виçине ӳстерме тата СССР-ăн малтанхи территорийĕсене тавăрма тĕллев лартать.

Пенси фондĕнче

# Соцпакет е укçа? Тĕрĕс йышăну тăвăр

**2021 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕнчен кая юлмасăр инвалидсем тата федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракан ытти категори çынисем 2022 çулта социаллă услугăсен илме чарăнасси е илме тытăнасси пирки заявлени пама пултараççĕ.**

Паянхи куна Чăваш Республикинче соцпакета пĕтĕмĕшпех е унăн хăш-пĕр пайне илме чарăнасси пирки 1773 заявлени йышăннă. Кун пек заявленисем ытларах 2020 çул вĕçĕнче тата 2021 çулта инвалидноç тутарнисенчен килеççĕ. Эмелсемпе социаллă услугăсене тӳлевсĕр илсе тăрасси пирки 199 заявлени йышăннă.

Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи управленийĕ çавна аса илтерет. Социаллă услугăсемпе мĕнле усă курасси пирки заявлени çырни çăмăллăхсемпе усă куракан çын услугăсем вырăнне укçан илме тытăнасшăн пулсан е укçа илесси вырăнне услугăсемпе усă курма пуçăнасшăн пулсан кирлĕ.

Заявление Пенси фончĕн сайтĕнче гражданинăн харпăр хăй кабинетĕнче, патшалăх услугисен порталĕнче, Пенси фондĕнче е МФЦ-ра пама пулать. Социаллă услугăсен шутне мĕн кĕни тата вĕсен форми пирки те сведенисене асăннă сайтсенче илме пулать.

Малтанах çăмăллăхсене тивĕçлĕ çынна уйăхсеренхи укçа тӳлевĕ (ЕДВ) туса панă чухне социаллă услугăсен пуххине памалла тăваççĕ. Çуллен унăн асăннă услугăсенчен хăшне хăварасси, хăшĕсемшĕн уйăхсерен укçан илме тытăнасси пирки йышăну тума ирĕк пур.

Федераци çăмăллăхĕсене тивĕçлĕ çын пĕр категорирен тепĕр категорие куçнă чухне (калăпăр, çар операцийĕсен ветеранĕнчен инвалида куçарас пулсан) тата 18 çула çитсе пыракан инвалид ачана маларах медицинăпа социаллă освидетельствовани тунă чухне ЕДВ тытăмне улăштарасси пирки заявлени пама пулать. Кун пек чухне соцпакетпа унччен мĕнле усă курнин йĕрки сыхланса юлать.

Соцпакет хакне çулсерен индексацилеççĕ. Халĕ вăл уйăхне 1211 тенкĕ те 66 пуспа танлашать. Ку шутра эмел пайĕ – 933 тенкĕ те 25 пус, санаторипе курорт пайĕ – 144 тенкĕ те 37 пус, транспорт пайĕ (хула çывăхĕнчи пуйăспа тӳлевсĕр çӳресси, санаторие çул укçи тӳлемесĕр кайса килесси) – 134 тенкĕ те 4 пус.

Чăваш Республикинче федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракан 95,1 пин çын. Вăл шутран ытларахăшĕ – инвалид. Федераци çăмăллăхĕсемпе усă куракансен шутне çавăн пекех Тăван çĕршывăн Аслă вăрçин участникĕсем тата çар операцийĕсен ветеранĕсем, вĕсен тăлăх мăшăрĕсем, радиаци катастрофисене пĕтерме хутшăннисем тата ытти категори çынни кĕрет.

Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи управленийĕ социаллă услугăсен пуххине харпăр хăйĕншĕн тĕрĕс суйласа илме ыйтать. Эмел препарачĕсемпе тата медицина изделийĕсемпе вĕçĕм усă куракансен çакна уйрăмах шута илес пулать.

**О. ВЕРЛИКОВА,**
**РФ Пенси фончĕн Чăваш Республикинчи управленийĕн ертсе пыракан эксперт специалисчĕ.**